МАРИЯ ВОЛКОВА: 80 ÇУЛ

«...малашлăх аслă-ха»

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче чăвашсен паллă поэчĕ Мария Андреевна Волкова çуралнăранпа 80 çул çитрĕ

Вăл Вăрмар районĕнчи Карăкçырма ялĕнче 1934 çулта çуралнă. Ачалăхĕ ăнăçлах пулман. Вĕсен çемйишĕн пысăк инкек килсе тухнă – кил-çурчĕ çунса кайнă. Ун хыççăн пахчари хура мунчара пурăнма тивнĕ.

Ялти тата Пысăк Енккассинчи шкулсенче пĕлӳ илнĕ хыççăн Мария Волкова И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн филологи факультетне вĕренме кĕнĕ.

Шкултах сăвăсем çырма юратнăскер хăйĕн хайлавĕсене районти «Хĕрлĕ ялав» хаçатра пичетлесе пынă. Çав тапхăрта хаçат редакторĕнче Герман Матвеев ĕçленĕ. Каярах вăл /1954 çулта/ Тăвай районĕнчи «Ленинец» /«Ял ĕçченĕ»/ хаçат редакцине куçнă. Мария Волкова хăйĕн сăввисене унта та пичетленĕ. Унăн Г.Матвеева патне 1956 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче янă çырăвĕнчен поэтăн çав тапхăрти пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕлме пулать: «Хисеплĕ Герман Матвеев юлташ! Хаклă тусăм, инçетри ентешĕм, мĕнле пурăнатăр?

Чи малтанах пур таса кăмăлтан хĕрӳ салам Сире. Пурнăçăрта, ĕçре уяв ячĕпе ырлăх-сывлăх сунса çитĕнӳсем сĕнетĕп.

Темле пуçласа темле çырмалла ĕнтĕ, çырассисем нумай, анчах вăрахчен шарламасăр пурăннă хыççăн ытла та аван мар. Тен, эсир маннă тенĕ, анчах ĕненĕр. Эсир мана асăнса, сума суса янă çырăвăра халĕ тин алла илсе вуларăм. Анне, хут пĕлменнипе, çырăвăра пуçтарса хунă та манса кайнă пулнă. Эсир сăввăмсене илсе вулама, пичетлеме те кăмăл тунă. Хăвăрах пĕлетĕр: ку маншăн çав тери ырă хыпар».

«Мĕншĕн памастăн сассуна? Е мантăн пулĕ эсĕ мана? Хуравпа пĕрле сăввусем те Тăвай енчелле çул хывасса шанатăп», – çырнă маларах ун патне Г.Матвеев редактор.

«Манман. Турăшăн та мана ан ӳпкелĕр. Сирĕн пек ырă юлташа манма юрать-и вара? – хуравланă сăвăç. – Халĕ вара Сире хăш-пĕр сăввăма ярса парам, малтанлăха нумаях яраймăп. Кĕçех тата уяв çитет. Çав кун тĕлне хуравăра кĕтсе илсен тем пекехчĕ».

Поэт хăйĕн çăмăлах мар пурнăçĕ çинчен çырать. Педагогика институтне куçăн майпа вĕренсе пĕтерме май килменни пирки хумханса пĕлтерет. Чăрмавĕ – вĕренме пулăшу çитейменни тата чирлесе ӳкни. Анчах та вăл пурпĕрех малалла вĕренме тăрăшать. «Вăхăт пур, халь çамрăк-ха, вĕренсе пĕтерĕп вĕçне çитиĕскерне, – тет вăл малашлăха шанса. Ĕçе кĕресси пирки шухăшлать. – Мĕн сентябрьтенпех хам сăвăсен пуххине хатĕрлетĕп, çырса пĕтеймен поэмăна ларатăп халь. – Ку поэмăна 54-мĕш çултанпах тĕрмешетĕп, калăпăшĕпе те хулăн ĕнтĕ, теми те шали-вали мар. Августра Мускава выставкăна кайса килтĕм /икĕ сыпăкĕ выставка çинчен пулмалла/. Сире ак поэмăна паллаштарăп. Вырăнĕпе хама та килĕшет, «Нарспи» стилĕпе çыратăп. К.Иванова халалласшăн. Начар пулсан намăс пулмĕ-ши тетĕп, халаллама чăтĕ-ши тесе хăратăп. Пулса çитнĕ малти сыпăксене Сире ярса паратăп. Çак çыру килсен, тен, Эсир ăна хаçатăрта пичетлĕр те. Колхоз пурнăçне, колхозниксен чун-чĕрине çывăх поэма вăл, темипе те, чĕлхе тĕлĕшпе те, ман шутпа, çăмăл, ăнланмалла пек. Ку ĕнтĕ пулас ĕç.

Хальлĕхе сывă пулăр-ха, çырăр. Мана ан ӳпкелешĕр. Сума суса Сирĕн ăлăкки тус-поэтессăр М.Волкова».

Хут листин хĕррине хушса çырса хунă: «Кăçал 22 тултаратăп. Çулсем иртеççĕ. Анчах малашлăх аслă-ха. Пурпĕрех вăхăт сахал пек, вăхăт вĕçĕсĕр хĕсĕк, çитмест. Нимĕн туса та нимĕн юлассăн туйăнмасть».

Калама çук шел, поэт кун-çулĕ, йывăр чире пула, вăхăтсăр татăлнă. Апла пулин те тăван халăх валли вăл чылай кĕнеке /10 ытла/ çырса пичетленĕ, çав шутра ачасем валли те. Унăн сăввисемпе композиторсем юрăсем кĕвĕленĕ, вĕсем халăх хушшинче анлă сарăлнă.

Мария Андреевна çуралса ӳснĕ тăван яла час-часах килсе çӳренĕ. Клубра ял-йышпа тĕл пулусем ирттернĕ. Унта хăйĕн сăввисене вуласа панă. Ял çыннисем уйрăмах вăл аккордеонпа хăй каласа юрланине юратса итленĕ.

Унăн ашшĕ, Андрей Волков, ялта ăста купăсçă шутланнă, Машăна та купăс калама вĕрентнĕ, хĕрĕ музыканта тухасса ĕмĕтленнĕ, ăна çĕнĕ купăс илсе пама пулнă, анчах ашшĕн ĕмĕчĕ вăрçа пула пурнăçланайман.

Мария Волковăна ентешĕсем асра тытаççĕ. Вăл пурăннă çурт çине /кайран вĕсем çĕнĕ пӳрт лартнă-ха/ Асăну хăми вырнаçтарнă.

Кашни çулах поэт çуралнă кун Карăкçырминчи клубра, Пысăк Енккассинчи шкулта тата ял библиотекинче тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ.

Мария Волковăн, хăйне чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Ираида Петрова патне янă сăввисем, алçырăвĕсем, сăнӳкерчĕкĕсем халĕ Пысăк Енккассинчи ял библиотекинче упранаççĕ. Вĕсене вĕрентекен хăйĕн юлашки çулĕсенче парнеленĕ. Çав хаклă япаласемпе библиотека ертӳçи Надежда Никонорова çамрăк ăрăва хавхаланса паллаштарать.

■ **Галина МАТВЕЕВА.**
Вăрмар районĕ

ĂСЛАЙ

Трактор-машина пуçтарать

Ăна ялта Гена Александров тесен – пĕлмеççĕ. Гена Стеклов тесен камне пĕлмен çын çук. Аслашшĕ чӳречи хашакне кантăк лартнă. Пиччĕшĕ Валентин та «Александров» хушаматпа çӳрет. Анчах ăна та Стеклов Вали теççĕ.

Гена Александров 1948 çулта Шоркка ялĕнче кун çути курнă. Çатракасси шкулĕнче 8 класс пĕтернĕ. Казахстанри Ульяновск районĕнчи Свердловск салинче механизаторсен училищинче 2 çул вĕреннĕ. Совхозра ДТ-75 тракторпа çулталăк ĕçленĕ. Унтан ăна çар хĕсметне илнĕ. Тăван яла таврăнсан Шупашкарти 1-мĕш автобаза самосвалĕпе 10 çул вăй хунă. Каçсерен техучилищĕре газоэлектросварщика вĕреннĕ. Ял хуçалăх техникине юсанă. Тимĕртен техника хатĕрĕ ăсталама кăмăллать. Автомашина-трактор пайĕсемпе пĕчĕк икĕ трактор турĕ. Виççĕмĕш Т-25 трактор пекех /сăнӳкерчĕкре/. Ăна ăсталанă чух ГАЗ-53 автомашина пайĕсемпе /руль механизмĕ, коробка, хыçалти мост тата ытти те/ усă курчĕ.

Мехпаркра виçĕ çамрăка газоэлектросварщика вĕрентрĕ, вĕсене хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарчĕ. Тракторĕпе пускилĕ, ял-йыша пулăшать. Пӳрте хутса ăшăтмалли пăрăхсене аппаратпа шăратса сыпăнтарать. Вăл прицеп, шыв пички, плуг, культиватор, çĕрулми купаламалли, утă çулмалли агрегатсем ăсталанă.

■ **Владислав ПЛАТОНОВ.**
Шупашкар районĕ,
Шоркка ялĕ

ТУСЛĂХ КĔПЕРĔ

Пĕчĕк йышпа – пысăк ĕç

Беларуç Республикинче октябрь уйăхĕн 4-13-мĕшĕсенче ку тăрăхра пурăнакан чăвашсен историпе культурине тĕпчес тĕллевпе йĕркеленĕ пĕрремĕш этнокультура экспедицийĕ иртнĕ. Унăн ĕçне Беларуç ăсчахĕсем – истори наукисен докторĕсем С.Пивоварчик, А.Нечухрин, С.Ходин профессорсем, С.Силова, К.Козак доцентсем, Беларуç патшалăх Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин историйĕн музейĕн директорĕ Н.Скобелев, Гродно хулинчи 35-мĕш шкулти музей директорĕ Р.Прохорова хутшăннă. Ăна И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ Владимир Васильев ертсе пынă. Эпир унпа тĕл пулса калаçрăмăр.

● В.Васильев профессор, "Ас тăвăм упрать" музей ертӳçи Р.Прохорова, 35-мĕш шкул директорĕн çумĕ А.Козловская.

– Владимир Александрович, мĕнле тĕллевпе тĕпе хурса йĕркелерĕр экспедицие?

– Программăра – тĕпчев тата культура ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш Енре çуралса ӳснĕ, Беларуç Республикинче фашистсене тĕп тума хутшăннă çынсем пирки документсем пухасси, чăваш тата беларуç халăхĕсен хутшăнăвĕсене тĕпчесси, хальхи чăвашсен пурнăçĕпе паллашасси, историн тата культурăн пĕлтерĕшлĕ вырăнĕсене çитсе курасси тĕп вырăнта пулчĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă паттăр ентешсем çинчен Беларуç патшалăх музейĕнче тата Гродно хулинчи 35-мĕш шкулти "Ас тăвăм упрать" музейре пуян материал упранать.

– Беларуç Республикинче хальхи вăхăтра чăвашсем йышлă пурăнаççĕ-и?

– Нумай нациллĕ патшалăх вăл, 130 ытла халăх çынни пурăнать унта. Пысăк пайĕ, паллах, белоруссем. Чăвашсем ытти халăх тата этнос ушкăнĕсен йышĕнче 14-мĕш вырăнта тăраççĕ. Наци хăйне евĕрлĕхне упраса хăварма, халăхсен культурине пуянлатма Беларуç чăвашĕсен пĕрлĕхĕ "Атăл" нумай пулăшать. 375 çынна пĕрлештерет вăл.

Чăвашсем Минск, Гомель, Гродно хулисенче йышлă пурăнаççĕ. Вĕсем ку çĕршыва иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче промышленноç тата энергетика предприятийĕсене тума нумайăн килнĕ. Чылайăшĕ каялла кайман, кунтах юлнă.

– Экспедици вăхăтĕнче мĕнле ĕçсем пурнăçласа ĕлкĕртĕр?

– Авалхи Гродно хулинче /2009 çулхи çĕртмен 23-мĕшĕнче Шупашкарăн тăванла хула пулса тăнă вăл/ курни-илтни чăваш тата Беларуç халăхĕсен пурнăçĕ, историйĕ, культури, йăли-йĕрки çинчен тĕпленĕрех пĕлме май панă. Хальхи вăхăтра хулара 353 пин çын, çав шутран 200 ытла чăваш, пурăнать. Гродно чăвашĕсем пĕрлĕх йĕркеленĕ. Ăна Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралса ӳснĕ В.Силов ертсе пырать.

Гроднăри йăхташăмăрсен курăмлă ĕçĕсенчен пĕри – 35-мĕш шкулта музей йĕркелени. Стендсем 1941-1944 çулсенче фашистсемпе вăрттăн кĕрешни çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Экспозицире "Коля пичче ушкăнĕ" çинчен пухнă материалсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Подпольщиксен ушкăнне вăрçă пуçлансанах Етĕрне районĕнче çуралса ӳснĕ Николай Алексеевич Волков йĕркеленĕ. 1942 çулхи февралĕн мăшăрĕпе иккĕшне тата юлташĕсене фашистсем персе пăрахнă. Хальхи вăхăтра ывăлĕ Георгий – Шупашкарта, хĕрĕ Нина Етĕрне районĕнче пурăнаççĕ.

Хула ĕçтăвкомĕнче Н.Волкова "Гродно хулин Хисеплĕ гражданинĕ" ят парас ыйтăва хускатрăмăр. Ĕçтăвком председателĕн çумĕ З.Кулеш Гродно хулинчи чăваш диаспорин ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕ каласа кăтартрĕ, йăхташăмăрсем Пĕтĕм Беларуçри наци культурисен фестивальне хастар хутшăннине палăртрĕ. "Хамăр ял" фольклор ушкăнĕ ун чухне чăваш юррисене юрласа тĕлĕнтернĕ. Халăха шăрттанпа, какай шӳрпипе, хуплупа, юн тултармăшĕпе, кавăн икерчипе сăйланă.

Беларуç Республикинче культурăра, ăслăлăхра, вĕрентӳре, экономикăра пысăк çитĕнӳ тунă ентешсем чылай. Вĕсен йышĕнче – паллă çар пуçĕ, çар наукисен кандидачĕ Ю.Портнов генерал-майор, В.Очайкин художник тата архитектор, Д.Михлеев кинорежиссер тата писатель, ыттисем. Кино çуртĕнче Д.Михлеевăн "Ось земли" кĕнекин презентацийĕнче пултăмăр.

– Беларуçпа Чăваш Енĕн туслă хутшăнăвĕсем çакăнпа кăна вĕçленмеç ĕнтĕ...

– Паллах. Экспедици вăхăтĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ, Беларуç патшалăх /Минск/ тата Я.Купала ячĕллĕ Гродно патшалăх университечĕсен историкĕсем малалла ĕçлеме калаçса татăлнă. Пĕрремĕш утăм тунă та ĕнтĕ: икĕ республика ăсчахĕсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин халĕччен паллă пулман саманчĕсем çинчен каласа кăтартакан статьясен пуххине хатĕрлеме пуçланă.

Чăваш Енри çамрăксен организацийĕсемшĕн С.Пивоварчик профессорăн сĕнĕвĕ кăсăклă пулассăн туйăнать. Вăл Гродно тата Шупашкар хулисенчи студентсене фашистсем чи малтан пырса кĕнĕ вырăнсене кăтартасшăн. Тĕслĕхрен, çĕртме уйăхĕн 22-мĕшне пĕрремĕш çапăçу пулнă заставăра кĕтсе илме пулать. Унтан çамрăксене заставăн, йытăсен, лаша патрулĕн ĕç-хĕлĕпе паллаштарĕç. Çавăн пекех палаткăсенче çĕр каçма, кăвайт чĕртме, хирте апатланма, спорт ăмăртăвĕсене хутшăнма, пултарулăха кăтартма май пулĕ.

Тĕпчев проекчĕсем, икĕ çĕршыв ăсчахĕсен программисемпе мероприятийĕсем т.ыт.те наци хутшăнăвĕсене çирĕплетме, аталантарма пулăшĕç.

■ **И.СЕРГЕЕВА**
калаçнă

Пушарта çунмасăр юлнисем

1961 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракассинчи шкулта тухнă пушарта 110 çын çунса вилнине чылайăшĕ пĕлет. Ун чухне 9-мĕш класра вĕренникем тата вĕсене ăс панă хăш-пĕр учитель çур ĕмĕр иртсен – 2013 çулхи июнь уйăхĕн 24-мĕшĕнче – тĕлпулу йĕркеленĕ.

Çак сăнӳкерчĕкре шăпах çав тĕлпулура çантарнă: пĕлĕвĕне пĕрле тарăнлатнисем шкулăн çĕнĕ çурчĕ умĕнче лараççĕ. Камсем-ха вĕсем? Сулахайран сылтăмалла, пĕрремĕш ретре – Нина Назарова /Çĕньял Пукашран/, Канашри медучилищĕне пĕтерсен больницăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Унпа çуммăн – физика учителĕ Михаил Кармаковпа мăшăрĕ Роза. Михаил Алексеевич ăна, хăйĕн вĕренекенне, аттестат илсен арăмĕ пулма ыйтнă. Роза Алексеевна ялта медсестрара тăрăшнă. Юнашарах – Ираида Трофимовна чĕлхеçĕпе Римма Алексеевна историк. Тамара Михайловна, Рита Степановна физик-учитель, Зина Васильевна – пурте тивĕçлĕ канура пани. Петр Шиверев /Услĕ Пукашран/ Шупашкарти приборсен заводĕнче ĕçлесе тĕп энергетика çитнĕ.

2-мĕш ретре – Михаил Николаев физрук, Урхас Кушкă больницинче шăл тухтăрĕнче ĕçлекен Николай Иванов. Унпа юнашар – шкул чемпионĕ Николай Степанов, ял хуçалăх институтне пĕтерсен Белгород облаçĕнче ĕçленĕ, комбинат ертӳçине çитнĕ, халĕ – канура. Тамара Сидорова та ялта медсестрара вăй хунă. Таисия Осокина "отличница" Çатракасси шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ, халĕ пенсире. Виталий Николаева тусĕсем нумаях пулмасть юлашки çула ăсатрĕç. Владимир Степанов – шкул чемпионĕ, "Çурçĕр уявĕсене" хутшăннă йĕлтĕрçĕ, "ГЭСстройра" профком ертӳçи пулнăскер. Толя Ефимов – Çĕнĕ Шупашкарти паллă строитель. Вăл нумаях пулмасть Хуракассинчех, тăван ялĕнчех, чаплă çурт çĕкленĕ. Т.Ефимов пĕр класрах вĕреннĕ, пушарта суранланнă Юльăна качча илнĕ.

Шел, ку сăнӳкерчĕкре пĕр класра ăс пухнисем пурте çук. Стас Афанасьев, Зоя Исаева, Витя Чалков, Борис Добров, Витя Шилер, Альберт Казаков, Петя Шувалов – пушар сиенне туйнăран пурнăçран ир уйрăлнă. Синкерлĕ çав кун Тамара Сударкинăпа Женя Ефимова вут-çулăм тытăмĕнчен хăтăлайман.

■ **Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

Юрий Григорьевич АЙДАШ /Григорьев/

77 çула кайса 2014 çулхи ноябрĕн 9-мĕшĕнче паллă поэт Юрий Григорьевич Айдаш /Григорьев/ пирĕнтен уйрăлса кайрĕ.

Юрий Айдаш 1938 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Çавалкас ялĕнче çуралнă. Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулта пĕлӳ илнĕ, Хусанти патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Учительте, Чăвашрадиора, Чăваш кĕнеке издательствинче, «Тăван Атăл», «Хатĕр пул» журналсенче ĕçленĕ.

Юрий Григорьевич – СССР Писателĕсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ /1996/, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премие /1990/ тата Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн /1991/ лауреачĕ. Ю.Айдаш – ăста сăвăç, прозаик, куçаруçă. «Йĕплĕ роза», «Тĕл пулу», «Кăнтăр çутипе», «Сăнсем», «Ирхи кĕлĕм» тата ытти кĕнекесе кăларнă. «Атнер» сăвăллă романĕ чăваш литературинче уйрăмах паллă вырăн йышăнчĕ. Вăл М.Ю.Лермонтов, А.С.Пушкин, С.А.Есенин сăввисемпе поэмисене, Швеци, Украина, Беларуç, Пăлхар, Азербайджан поэчĕсен хайлавĕсене куçарнă.

Юрий Григорьевич сăнарĕ пирĕн чĕрере ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ.

**«Хыпар» Издательство çуртĕн коллективĕ,
Чăваш Республикинчи Профессионал писательсен союзĕн правленийĕ.**

* * *

Паллă çыравçăпа паян 11 сехетрен пуçласа Пичет çуртĕнче /М.Я.Яковлев проспекчĕ, 13 çурт/ сывпуллашаççĕ.

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ

Юрий Григорьевич /АЙДАШ/ Григорьев

çыравçă вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланать.

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă анне, кукамай – Элĕк районĕнчи Мăн Вылă ялĕнче пурăнакан Ольга Егоровна ПЕТРОВА – ноябрĕн 12-мĕшĕнче 70 çул тултарать. Сумлă юбилейпе эпир ăна чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Сывлăхлă та телейлĕ пул, аннеçĕм. Атте килĕн ăшшине малашне те упрама сана турă вăй-хал патăр. Пурнăçу тулăх пултăр, сĕтелӳ апат-çимĕçрен ан татăлтăр.

Хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.

Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕн судйисен статусĕ çинчен" саккунĕн 5-мĕш статйипе килĕшуллĕн Чăваш Республикинчи судьясен квалификаци коллегийĕ
- Чăваш Республикин Аслă сучĕн икĕ судйин,
- Чăваш Республикин Арбитраж сучĕн судйин,
- Канаш район сучĕн председателĕн,
- Канаш район сучĕн председателĕн çумĕн вакантлă должноçĕсем уçăлни çинчен пĕлтерет.

Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕн судйисен статусĕ çинчен" саккунĕн 5-мĕш статйин 6-мĕш пункчĕнче кăтартнă документсене тата ыйтса çырнине ĕç кунĕсенче 2014 çулхи декабрь уйăхĕн 9-мĕшĕччен йышăнаççĕ:
- Чăваш Республикин Аслă сучĕн судйин должноçĕн претендентчĕсенчен 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 17 сехетчен, 2014 çулхи декабрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче – 16 сехетчен çак адреспа: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 311 пӳлĕм;
- Чăваш Республикин Арбитраж сучĕн судйин должноçĕн претендентчĕсенчен 8 сехет те 30 минутран пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 17 сехет те 30 минутчен, 2014 çулхи декабрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче – 16 сехетчен çак адреспа: Шупашкар хули, Ленин проспекчĕ, 4 çурт, 304 пӳлĕм;
- Канаш район сучĕн председателĕн тата председатель çумĕн должноçĕсен претендентчĕсенчен 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 17 сехетчен, 2014 çулхи декабрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче – 16 сехетчен çак адреспа: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 302 пӳлĕм.

Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта пăхса тухассине претендентсене ятарлă йĕркепе пĕлтереççĕ.

СУТАТĂП ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, торф, кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 89603080854, 89170660480.

618.Косилки, грабли, **фрезы,** опрыскиватели, **погрузчики** на МТЗ. **ДОСТАВКА!** Тел.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

685.ТРОТУАРНУЮ ПЛИТКУ, брусчатку – дешево. Распродажа. Доставка. Укладка. Т. 89033220479.

686.Песок, щебень, гравмассу; вывоз мусора. Т. 89033220479.

687.Профнастил, металлочерепицу, водостоки. Скидки. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

ПУЛĂШУ УСЛУГИ

688.Кровельные, фасадные работы. Гарантия. Т. 89033220479.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 13-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерстви "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
[illegible]
ПИ ТУ21-00331 [illegible]
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-[illegible]" – 78458

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор заместителĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор заместителĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор заместителĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
В.В.ТУРКАЙ /директор-тĕп редактор/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Редакцин издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
[illegible]
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, [illegible]

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru

[illegible]
428019, [illegible], И.Яковлев [illegible], 13.
56-00-38 – [illegible]

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 318-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет печечĕ. Калăпăшĕ 2 печат листи. [illegible]
[illegible]
Номера 12.11.2014 алă пуснă.
Печете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7397. Заказ 4295.